

# Мăн кун

## (5–6-мĕш классемпе ирттермелли уяв сценарийĕ)

*И.Н. ФЕДОРОВА, Çĕрпӳ районĕнчи Михайловкăри А.А. Александров ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта чăваш чĕлхипе литератури вĕрентекен*

**Сĕм авалтан аталанса пынă йăла-йĕркене çирĕп тытса пыни ача-пăчана тĕрĕс-тĕкел ӳстерме, çитĕнекен ăрăвăн ăс-тăнне çивĕчлетме, шухăш-кăмăлне пуянлатма, ĕçе хăнăхтарма, ваттисене хисеплеме, пурăнма вĕрентмешкĕн пулăшнă. А.Г. Григорьев профессор калашле, «Халăх йăли-йĕрки – хăй пĕр университет». Чăн та, шкулта вĕренме май килмен пулин те пирĕн мăн асаттесем ăс-пуçран нимĕн чухлĕ те катăк пулман, чун хавалĕпе те аптраман. Вĕсен пурнăçне çирĕп тытса пыраканни йăла-йĕрке пулнă. Уявсенче ачасем сăвă калама, юрлама, ташлама вĕреннĕ, кулленхи пурнăçра ал ĕçĕпе хуçалăх ĕçĕсене тума хăнăхнă, пĕр-пĕринпе хутшăнса туслă пулма, ватта-вĕтте хисеплеме ăнтăлнă. Пирĕн те ырă йăла-йĕркене малалла тытса пымалла.**

**Уяв тĕллевĕсем:** Мăн кун – савăнăçлă уяв пулнине çирĕплетни; чăваш халăхне, унăн культурине, чĕлхине хисеплеме хăнăхни; ачасен ушкăнпа выляс, пĕр-пĕрне пулăшас енĕсене аталантарни; халăхăмăрăн вăййи-куллинчи, юрри-ташшинчи илеме курма вĕренни.

**Кирлĕ хатĕрсем:** уяв ячĕпе саламласа ачасем çине сапмалли тырă, типĕтнĕ хăмла (килте тĕртнĕ пиртен çĕленĕ çыхăллă пĕчĕк хутаçпа); сĕтел, сак, тенкелсем, сĕтел çитти, сак çине сармалли тĕртнĕ пир, çытар, темиçе чашăк; сăрланă çăмартасем, пĕчĕк кукăльсем, пылак çимĕçсем, сĕтел шăлмалли пĕчĕк пусма; çакса янă тата хăмаран ăсталанă иккĕн ларса ярăнмалли чуччусем, пĕчĕк ачасем валли утланса çӳремелли «лашасем», вăрăмах мар вĕрен, тĕрленĕ сăмса тутри.

### Уяв юхăмĕ

### 1-мĕш курăну

Ял хĕрринчи илемлĕ вырăн.



Унтри мучи (*ял хĕрринчи çерем еннелле туйи çине таянса утнă май).* Мăн кун тенĕ кун ача-пăча ирех хĕвел тухнине кĕтсе илме ял вĕçĕнчи çерем çине пуçтарăнаканччĕ. Паян вара пĕри те курăнмасть. Е хам хыпаланарах тухрăм-ши?

Çав вăхăтра шăв-шав илтĕнсе каять, ачасем палăртнă вырăналла васкаççĕ. Кашниех çĕнĕ кĕпепе. Вĕсемпе пĕрле Анук кинеми те пур.

Ванюк. Эпĕ санран маларах çитрĕм, Ваçук. Ытла нумай çывăратăн.

Ваçук. Хĕвел тухайман-çке, эпĕ вăхăтлах çитрĕм.

Ванюк. Ырă кун пултăр, Унтри мучи!

Унтри мучи. Сире те, ачасем, ырă кун сунатăп.

Санюк. Ачасем, пăхăр-ха, пăхăр, Марукăн кĕпи ытла та хитре! (*Пырса тыткаласа пăхать.*) Кам çĕлесе пачĕ?

Марук. Аппа. Вăл тем те çĕлеме пĕлет. Сирĕн хăвăрăн та çĕнĕ кĕпесем-çке.

Санюк. Санăн хитререх çав! (*Юлташĕн кĕпи çине ăмсанса пăхать.*)

Унтри мучи. Çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăнса, ачасем, эсир тĕрĕс тунă, мĕншĕн тесен Мăн кун – çĕнĕ япалана, тасалăха кăмăллать.

Ванюк. Хĕвел тухать! (*Пурте хĕвел тухнине пăхаççĕ.*)

Санюк. Еплерех илемлĕ вăл!

Унтри мучи. Ачасем, сире Мăн куна мĕнле уявлама пуçлани çинчен каласа парам-и?

Пурте. Каласа пар, каласа пар!

Унтри мучи. Итлĕр апла. Ĕлĕк-авал, темиçе ĕмĕр каялла, çакăн пек халап çӳренĕ. Хĕл каçиччен тӳпери хĕвел çине час-часах усалсем тапăннă, хĕвеле туртса антарасшăн пулнă. Çак усал ĕçе тума Вупăр карчăк хĕтĕртсе тăнă. Хĕвел тӳпере сайра хутра çеç курăнма тытăннă. Хастар каччăсем хĕвеле тыткăнран хăтарма шутлаççĕ, çапăçăва тухса каяççĕ. Çичĕ кун та çичĕ каç çапăçаççĕ паттăрсем Вупăр тарçисене хирĕç. Хĕвеле ирĕке кăлараççĕ-кăлараççех. Вупăр карчăк хăйĕн тарçисемпе ĕмĕрлĕхех çĕр айне, шуйттан патшалăхне, тарать.

Паттăрсен чылай юн тăкма тивнĕ, апла пулин те вĕсем çĕнтереççĕ, хĕвеле сурпан çине хурса çĕклеççĕ те пĕр çӳллĕ ту çине йăтса хăпартаççĕ, унтан – çав ту çинчи чи çӳллĕ йывăç çине. Хĕвел амăшĕ хăй ачине курнипе савăнса чупса пырать, аллисемпе йăтса илсе кăкăр сĕчĕпе ĕмĕртет. Вăйсăрланнă хĕвел тӳрех хăватланса каять, йăл-ял çисме тытăнать. Унтан ташласа та савăнса тӳпенелле çĕкленсе хăпарса каять.

Çапла вара, Мăн кун уявне хĕвеле ирĕке кăларнине халалласа ирттереççĕ.

Анук кинеми (*ачасем патне пырса*). Эсир те, ачасем, тӳпери хĕвел пекех хитре, савăнăçлă пулăр. (*Çапла каласа вĕсем çине тырă, хăмла сапать. Ачасем пĕр-пĕрне тĕрткелеççĕ.)*

Унтри мучи. Хĕвел тӳпенелле хăпара пуçларĕ ав. Ялалла утар, ачасем. Сирĕн паян кашни килех кĕрсе телей валеçмелле пулĕ. Пирĕн тĕле те ан манăр.

Шăкăл-шăкăл каласса ял еннелле утаççĕ.

### 2-мĕш курăну

Пӳрт ăш-чикĕ. Сĕтел, сак, тенкелсем. Сĕтел çинче чашăкпа çăмарта, кукăль-пӳремеч. Сак çине тĕртнĕ пир сарнă. Ун çинче пĕчĕк Санюк çывăрать. Тĕпелтен Анук кинеми кăштăртатса тухать те мăнукĕ патне пырать.

Анук кинеми. Санюк, Санюк тетĕп. Вăран-ха, мăнукăм! Паян пирĕн ки-ки-ри-кик сар автан Мăн кун ячĕпе хĕрлĕ çăмарта тунă. Ял ачисем киличчен чи малтан санах çитерем-ха. (*Ача сак çине хăвăрт тăрса ларать.)*

Санюк. Асанне, пирĕн автан хĕрлĕ çăмарта та тума пĕлет-и?

Анук кинеми. Пĕлет çав. Эсĕ вăраниччен вăл сĕтел çинчи çăмартасене тума та ĕлкĕрнĕ. Пĕрне тутанса пăх-ха. *(Ачана çăмарта парать.)* Кĕçех пирĕн пата хăнасем килĕç, çавăнпа та, Санюк, хăв хыççăн сĕтеле шăлса ил. (*Анук кинеми тĕпелелле кĕрсе каять. Санюк çăмартине çисе янă хыççăн сĕтел варрине çеç шăлкаласа илет. Çав вăхăтра асламăшĕ тухать те мăнукĕ ĕçленине сăнать.)* Ял йĕри-тавра чупса çаврăн, мăнукăм.

Санюк (*кӳренчĕклĕн тата тĕлĕнсе*). Асанне, пирĕн ялĕ ытла та пысăк-çке. Эпĕ ачасем киличчен ун тавра çаврăнма ĕлкĕрейместĕп. Кайран тухса чупăп, юрать-и?

А н у к  к и н е м и (*кулараx*). Эх, мăнукăм, ял йĕритавра чупса çаврăн тени вăл – сĕтел варрине çеç мар, хĕррисене те шăл тени пулать. Ăнлантăн-и?

С а н ю к. Ăнлантăм.

Сĕтел хĕррисене те шăлса илет.

### 3-мĕш курăну

Алăка шаккани илтĕнет. Тĕпелтен У н т р и  м у ч и тухать.

У н т р и  м у ч и. Ачасем килчĕç пулмалла. (*Алăка уçать.*) Килĕр, килĕр, ачасем!



Малтан хĕр ача кĕрет.

У н т р и  м у ч и. Хĕрĕм, кĕр! Пирĕн пӳрте чи малтан эсĕ кĕтĕн. Кăçал ĕнтĕ ĕне тына туса парĕ, сурăхĕ – путек. Ак телей, чăн ырлăх! Кил-ха, сана тĕк çытар çине лартам. (*Хĕр ачана лартать те çăмарта, пылак çимĕç парать.*) Чăххи-чĕппи, хур-кăвакалĕ ăнса пулччăр тетĕп-çке.

А н у к  к и н е м и. Иртĕр, ачасем, ларăр. (*Сĕтел хушшине тата кăмака çумĕнчи тенкел çине лартать.*) Акă çăмарта илĕр-ха, кукăльне те çийĕр, икерчи те сивĕнсе çитмен.

А ч а с е м. Тавтапуç.

1 - м ĕ ш  а ч а. Ачасем, атьăр хамăр хушăри паттăра тупса палăртар.

2 - м ĕ ш  а ч а. Мĕнле майпа?

3 - м ĕ ш  а ч а. Çак çăмартасене пĕр-перинпе шаккаса тухăпăр, хăш çăмартин хуппи çĕмĕрĕлмест, çав ача паттăр пулать. (*Валçсе панă çăмартасене пĕрпĕринпе шаккама тытăнаççĕ. Петĕр паттăр пулса тăрать.*)

У н т р и  м у ч и. Маттур, Петĕр, паттăра юлтăн. Авалтан килекен йăла тăрăх, çĕнтерӳçĕн çăмартине çисе яма юраман. Вăл ăна тепĕр киле илсе кайнă. Çав çăмартапах ыттисене валеçсе панă çăмартасене хирĕç çапнă.

4 - м ĕ ш  а ч а. Енчен те çăмарти çĕмĕрĕлнĕ пулсан мĕн тунă?

У н т р и  м у ч и. Паллах, шуратса çисе янă. Эсир те панă кучченеçсене çийĕр, çăкăр-тăвартан аслă ан пулăр. (*Ачасем çăмартисене çиеççĕ, Петĕр çеç çăмартине кĕсйине чикет.*)

С а н ю к (*çăмартине çинĕ май*). Пирĕн автан тунă хĕрлĕ çăмарта тутлах çав.

К и р у к. Чăнах та, тутлă. Анне мана ирех кукамай патне сĕт пама ячĕ. Кайса килтĕм вара. (*Кӳренсе.*) Мана кукамай шурă çăмартах çитерчĕ.

С а н ю к. Кукамун автанĕ хĕрлине тума пĕлмест пуль?

К и р у к. Мана кукамай: «Çамрăк-ха вăл», – терĕ.

С а н ю к. Ан кулян, кукамун автанĕ тепĕр Мăнкунччен хĕрлĕ çăмартасем тума вĕренĕ-ха.

Ачасем кулаççĕ. Пĕри йăкăлт-якăлт сиккелесе ларать.

1 - м ĕ ш  а ч а (*сиккелекеннине тĕксе*). Тӳрĕ лар, Анук кинемин чăххи пусма лармасан эсĕ айăплă пулăн.

2 - м ĕ ш  а ч а. Тӳрех ларатăп-çке.

1 - м ĕ ш  а ч а. Лармастăн çав.

2 - м ĕ ш  а ч а. Юрĕ, юрĕ, шăпах ларăп, тек айкашмастăп.

3 - м ĕ ш  а ч а. Ачасем, нумай лартăмăр, айтăр каяр.

1 - м ĕ ш  а ч а. Тури касра чуччу тунăччĕ, çавăнта ярăнма каяр. Кайран тĕрлĕ вăйă выльăпăр.

2 - м ĕ ш  а ч а.

Ырă сунса кĕтнĕшĕн,
Сĕтел тавра лартнăшăн,
Кучченеçсем панăшăн
Тавах сире, Анук кинеми!

П у р т е. Тавтапуç кучченеçсемшĕн, Унтри мучи. Сывă пулăр!

С а н ю к. Асанне, эпĕ те вĕсемпе каятăп, юрать-и?

А н у к  к и н е м и. Каях, паян ача-пăчан вылясkулас килет пуль.

У н т р и  м у ч и. Кайран татах килĕр, ачасем. Атя, Анук, эпир те ĕçсене пуçтарса хăнана кайма хатĕрленер.

Тухса каяççĕ.

### 4-мĕш курăну

Сцена çинче чуччусем. Ачасем ярăнаççĕ, выляççĕ. Пĕрисем çăмарта кустараççĕ. Çĕр çинче пĕчĕк лупашка тăваççĕ. Çăмартасене 1–2 метртан çавăнта кĕртсе ӳкермелле ăмăртаççĕ.



1 - м ĕ ш  а ч а. Манăн лупашкана икĕ çăмарта кĕрсе ӳкрĕ.

2 - м ĕ ш  а ч а. Манăн – виççĕ!

3 - м ĕ ш  а ч а. Манăн пĕрре çеç çав.

4 - м ĕ ш  а ч а. Манăн – пиллĕк! Манăн чи нумайăи. Апла пулсан пирĕн çемьере кăçал выльăх-чĕрлĕх те, тырри-пулли те ăнса пулĕ.

Тепĕр çĕрте ачасем чуччупа ярăнаççĕ, хăшĕ-пĕрисем «Шакчулле» (Г.И. Воронцов «Ача-пăча вăййисем», 90 стр.) выляççĕ, теприсем – «Вĕренпе сикмелле». Санюкпа Кирук «лашасем» çине утланса сӳреççĕ.

5 - м ĕ ш  а ч а. Ачасем, айтăр икĕ ушкăна уйрăлса «Çерем ватса вир акрăм» вăййа выляр.

П у р т е. Айтăр, айтăр!

«Çерем ватса вир акрăм» вăйă.

6 - м ĕ ш а ч а. Çитĕ ку вăййа выляса. Халĕ тутăр пăрахмалла выляр.

А ч а с е м. Выляр!

7 - м ĕ ш а ч а. Эпĕ тутăр пăрахаканĕ пулатăп. Пурте вăйă картине тăрăр, хыçалалла çаврăнса ан пăхăр.

Эп утатăп хурланса
Хама юлташ шыраса.
Утсан-утсан чупатăп,
Тутăр пăрахса хăваратăп.

Çак сăмахсене каласа ертсе пыракан вăйă карти тулашĕнче утса çӳрет, аллинче – сăмса тутри. Кĕçех вăл пĕр ачи хыçне тутăр пăрахса хăварать те малалла чупса каять. Хăй хыçне тутăр пăрахнине сиссен ачан ăна илмелле те ертсе пыраканнине хăваласа тытмалла. Сăмса тутри выртнине сисмен ачана мĕнле те пулсан ĕç тутараççĕ.

6 - м ĕ ш а ч а. Васук, санăн хыçра тутăр выртать, эсĕ пĕлеймерĕн. Тантăшсем, ăна мĕн тутарăпăр?

П у р т е. Юрă юрлаттарар.

Васук «Пĕчĕк çеç путене...» юрра юрлать.

6 - м ĕ ш а ч а. Маттур, Васук! *(Каллех сăвăласа çаврăнать.)* Тутăрĕ кам хыçĕнче?

1 - м ĕ ш а ч а. Кирук хыçĕнче.

6 - м ĕ ш а ч а. Кирука мĕн тутарăпăр?

2 - м ĕ ш а ч а. Вăл купăс калама ăста, купăс калаттарас.

К и р у к. Хаваспах, мана юлташсем те пулăшĕç.

Кирук купăс каланă май ыттисем юрлаççĕ.

3 - м ĕ ш а ч а. Тантăшсем, айтăр тавлашмалла такмаксем калар.

Ачасем икĕ ушкăна пайланаççĕ те юрлаççĕ.

Х ĕ р а ч а с е м.

Аналла-тăвалла
Çумăр çапса çумалла.
Çакă ялăн ачисене
Шăпăрпала шăлмалла.

А р ç ы н а ч а с е м.

Аналла-тăвалла
Çумăр çапса çумалла.
Çакă хĕр ачасене
Пăрпа лартса ямалла.

Х ĕ р а ч а с е м.

Шыва кайма мĕн лайăх?
Мăшăр витре пит лайăх.
Хирĕç тăрса ташлама та
Çак ачасем пит лайăх.

А р ç ы н а ч а с е м.

Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă,
Юрлама тухас тетпĕр.
Юрлама та, ташлама та
Эпир вĕренес тетпĕр.

Х ĕ р а ч а с е м.

Пире анне çуратнă,
Çуратнă та юратнă.
Ним тума вĕрентиччен
Юрра-ташша вĕрентнĕ.

А р ç ы н а ч а с е м.

Эпир апла марччĕ-ха,
Эпир капла марччĕ-ха.
Ушкăнĕпе пĕрле тăрсан
Пултараяканччĕ-ха.

П у р т е.

Шурă тутăр паттис мар,
Паттисран та кая мар.
Эпир кунта артист мар,
Артистран та кая мар.

Эпир Михайловкăсем,
Çĕрпӳ районĕсем.
Паянхи уявăмăрта
Савăнтараканĕсем.

4 - м ĕ ш а ч а. Ачасем, юрласа-ташласа, выляса вăхăт иртнине те сисмерĕмĕр. Килелле каймалла.

А ч а с е м. Каяр!

А ч а с е м чупса тухса каяççĕ.

***ЛИТЕРАТУРА***

*Воронцов Г.И.* Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 2001.

*Енькка Е.В.* Родной край. Материальная и духовная культура чувашского народа XVI–XIX веков: учебное пособие для 6–7 классов. – Чебоксары, 2004.

Чăваш халăх сăмахлăхĕ: ача-пăча сăмахлăхĕ. VI т. I пайĕ. – Шупашкар, 1985.

Чăваш сăмахлăхĕ: 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки, 1-мĕш пай / Н.Г. Ивановăпа В.П.Никитин пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, – 1993.

Елена Енькклан ӳкерчĕкĕсемпе усă курнă.

## Ваттисен сăмахĕ – ăс-хакăл ахахĕ

**Мăн кун килет мăн çулпа, иртсе каять вак çулпа.**

**Мăн кун иртсен вильăхсем çĕр пăсĕпе те тăранса пурăнма пултараççĕ.**

**Мăн куна çерçи те сăра тăвать.**

**Çулталăкĕпех Çаварни мар, Мăн кун типпи те килет.**

**Çимен – Çимĕкре, ачи-пăчи – Мăн кунта.**

**Йăла хăнана кайсан та килте юлмасть.**